## Урок теми:

# «Мишшан ачалăхри юратăвĕ»

Урока хатерлекенĕ:
Роза Васильевна
Михуткина,чăваш чĕлхипе
литература  вĕрентекенĕ

Чăваш республики ,Çĕмĕрле районĕ,
Саланчăкри шкул-интерначĕ

**Урок тĕллевĕсем:**

1.Ывăлĕ çинчен Çеçпĕл амăшĕ каласа панине ачасем патне çитересси.

(Давыдов –Анатри çырса илнĕ»Кăвар чĕре кĕнекерен).

2.Ăнланнине вырăсла каласа парасси.

3.Ачасене Çеçпĕл юратнă юррисемпе паллаштарасси .

«Мĕн сас  лайăх»юрăна юрлама вĕрентесси.

4.Çеçпĕлĕн «Çăлтăр» журналта пичетленсе тухнă пĕрремĕш сăввине пăхмасăр калама вĕрентесси:. «Звонок»ятлă сăвă.

5.Çеçпĕл Мишшин паха енĕсене палăртса тухасси: ĕçлеме, тĕрлеме, ӳкерме, выляма, юмах итлеме,сăвă çырма; Украинăлла, чăвашла, вырăсла юрлама;йывăç лартма юратнине ачасем патне çитересси;

6.Мишшан  ачалăхĕ йывăр пулнине, çитмен пурнăçпа, выçăллă-тутăллă пурăннине ăнлантарса парасси.

Нимене

Нимене! Нимене!
Ян янранӑ ир-ир.
Пулӑшса пӗр- пӗрне
Йӳнӗҫтернӗ эпир.

# Кам вăл Çеçпĕл Мишши?





Михаил Кузьмич Кузьмин (Çеспĕл Мишши) 1899-1922 çулсенче пурăннă. Хуса кĕпĕрнин Çĕрпӳ уесне кĕнĕ Касаккасси Шĕкĕр (халĕ Канаш районĕнчи Çеçпĕл ялĕ) ялĕнче çуралнă.

Çĕнĕ сăмахсем

ниме - ĕç -работа

кăвакал-утка,

сăрнай - волынка (музыкальный инструмент)

ака-суха- пашня

автан-петух

шăрантара парать- звонко поёт

çирĕп кăмăллă- крепкая душа.

# Çеçпĕл Мишши амăшĕпе пĕрле



# Çеçпĕл Мишши амăшĕ каласа пани

- *Мишша тăхăр уйăхрах утма тытăнчĕ, çултаlăк тултарсан калаçма вĕренчĕ. Мишшăна 5 çултах хамăрпа пĕрле тырă вырма (жать)илсе каяттăмăр.Кĕске ыраша тăпăлтара- тăпăлтара вăл ман кĕлте(сноп) çине хуратчĕ. Пĕррехинче çапла Мишша тем ăшне кĕрсе ларнă та: кăт- кăтик, кăт-катик! тесе хăлаçланать. (руками машет). Эпир кулса пăхса тăратпăр. Мĕн тăватăн эс унта?- тетпĕр.*
- *-Çăмарта тăватăп,- тет Мишша*

# Мишша ĕçлеме юратнă

- *. Тата тепрехинче , çав çулах,пĕр кĕрхи кун, ир пуçласа каçчен пахчара хăмла татрăмăр. Пирĕнпе пĕрлех Мишша та çине тăрса хăмла татать.*
- *-Мишша, ĕçле- ĕçле ывăнтăн пулĕ, ларса кан,- тетĕп çакна шеллесе.*
- *-Çук ,канмастăп, часрах татса пĕтересчĕ,- тет Мишша. Эпир пĕчĕк ача çапла калаçнинчен пурте тĕлĕнтĕмĕр.)*

# Мишша юрлама юратнӑ

- *Пӗррехинче хур чӗпписене ҫерем ҫине хӑваласа кайрӑмӑр. Манпа пӗрле пилӗк ҫулхи Мишша та пычӗ. Хӗвел хӗртет. Шӑрӑх. Мишша питех те савӑнӑҫлӑ: вырӑнта тӑма та пӗлместь,хурсем хушшине кӗре- кӗре тухать. Эпӗ вӑхӑт ирттӗр тесе , юрӑ ӗнӗрсе ларатӑп.Мишша ман пата пычӗ те, кӗтмен ҫӗртен юрӑ пуҫларӗ:*
- *«Шыв хӗрринчи кӑвакал, кӑвакал,*
- *Сана хуҫа виҫӗ пуспа сутас, тет.*
- *Сӑрнай илсе калас , тет.»*
- *Вӑл вара ҫав юрра хӑйсем шыва кӗме ҫӳренӗ чух юрлани ҫинчен каласа пачӗ. Украина юрри- чӑвашла куҫарнӑ:*
- *«Иди, иди, селезню,до домуПродам тебе дедове старому*
- *За три копье селезня продала,*
- *А на копу дударика найняла.*

# Хăнара юрăсем юрлама юратнă

- « Уя тухсан мĕн сас лайăх?
- Ака- суха сасси лайăх.
- Яла кĕрсен мĕн сас лайăх?
- Автан сасси- çавă лайăх...»

# Мишша кĕнекесем,сăвăсем вулама юратнă

- *«Мишша шкула каиччен ашшĕнчен вулама вĕренчĕ.Çул хыççăн çул иртрĕ, Мишша шкула çӳреме пуçларĕ.Кĕнеке вулама  юрататчĕ, хавхалансах сăвăсем вулатчĕ.*

# Çеçпĕл Мишши – шкул ачи

1907-1911 çулсенче Шăхасанти пуçламăш шкулта вĕреннĕ.

Тĕрĕс та илемлĕ вуланă, çыру ĕçĕсене тăрăшса çырнă. Унăн почеркĕ чи пахи пулнă. Вăл вырăсла та, чăвашла та таса калаçнă.



Шăхасанти учительсем хатĕрлекен иккĕмĕш класлă шкул тата ун çумĕнчи пуçламăш шкул пулнă çурт, унта 1914—1917 çулсенче Çеçпĕл Мишши вĕреннĕ.

MyShared

1 тапхăр

# Шăхасан тапхăрĕ

(1917 çулхи августчен)

**Шăхасанта вĕреннĕ çулсенче Мишша сăвăсем хайлама пуçлать,М.Лермонтовăн «Горные вершины» çеммине çывăх йĕркесем шăрçалать. Çав çулсенче вăл вырăсла çырнă «Правила стихосложения» кĕнекене тишкерет, сăвăсем çырма вĕренет.**

MyShared

# Шăхасан



**Юлташěсемпе пěрле «Звездочка» ятлă журнал кăларать. Вырăс литературипе интересленет.**



Шăхасанти вěрентекенсем хатěрлекен иккěмěш класлă шкулě

# Перремĕш сăвви « Звонок»

- *Миша Шăхасанта вĕреннĕ чухне , «Çăлтăр» журнал кăларса тăнă. Савăнта унăн сăввисем çырăннă. Пĕрремĕш сăвви «Звонок» ятлăччĕ*
- *«Трелью золотою*
- *Маленький звонок.*
- *Утренней порою*
- *Зовёт нас на урок».*

# Миша тӗрлеме юратнӑ

- *«Миша тӗрӗллӗ кӗпе питӗ тӑхӑнасшӑнччӗ,анчах та манӑн тӗрлесе ларма вӑхӑт ҫукччӗ. «Кӑмӑлу пулсан – хӑвна тӗрлеме (вышивать) вӗрентӗп»,- терӗм пӗррехинче. Миша вара тимлӗн пӑхса ларса тӗрлеме вӗренчӗ. Ҫимӗк вӑййине вара хӑй тӗрленӗ кӗпепе тухрӗ.».*

# Мишша çутçанталăка юратнă



- *«Мишша çутçанталăка юратакан ачаччĕ. Çулсерен вăл урама йывăçсем лартма тăрăшатчĕ, ытларах хурăн ( берёзу) лартатччĕ».*

# Мишша лашасене, ӗне, сурӑхсене пӑхнӑ



# Мишша амӑшне мӗн пӗчӗкрен пулӑшнӑ



Мишша ҫамрӑклах амӑшне тӗрлӗрен ӗҫре пулӑшма тӑрӑшать : кӗпе ҫӑвать, кил таврашне тасатать, ака тӑвать, кӗтӳ кӗтет. Вӑл ӳкерме , юрлама, тӗрлеме те пӗлнӗ,уйрӑмах вулама килӗштернӗ.

# Нумай- нумай сăвăсем çырнă

- Çапла вара ,ачасем, сирĕн ачалăхри самантсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть Мишша. Сирĕн пекех чупнă ,вылянă, сăвăсем каланă, кĕнеке вуланă, тĕрленĕ. Анчах та унăн турă (бог) паракан талант пулнă. Вăл ӳкерме,тата сăвă çырма юратнă. Нумай_нумай сăвăсем çырнă: слайд: «Сăвăсем» (1928, 1940), «Хурçă шанчăк»(1948), «Çырнисен пуххи»(1959, 1989, 1999) «Поэзи чечекĕ»(2002). Тĕнчери чи чаплă поэтсенчен пĕри пулса тăнă. Паллă чăваш поэтне халăх манмасть, ун ячĕпе асăну каçĕсем, куравсем йĕркелеть.

## Çеçпĕл пирĕнпе

Поэт
ăс хакалĕ
– пирте,
ун пилĕ
пырĕ ĕмĕре.

Кашни
чăваш халь-
пĕр Çеçпĕл
Кашни
чăваш халь
– пин чĕре

MyShared



Эпир - Çеçпĕл çеçкисем

Эппин çеçкерех –ха Çеçпĕл

MyShared

# Киле ӗҫ :

- Ҫеҫпӗлӗн «Ҫăлтăр» журналта пичетленсе тухнă пӗрремӗш сăввине«Звонок» пăхмасăр калама вӗренсе килмелле .

# Урок вĕçĕ

**Тавтапуç. Сывă пулăр!**